25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
20
ЫТЛАРИКУН
245 (6180) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Сыхăну ĕçне лайăхлатар

Сыхăну средствисем—почта, телеграф, телефон, радио—тăшмана хирĕç пурнăçланакан питех пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче вĕсен пĕлтерĕшĕ тата та ӳсрĕ. Лайăх йĕркеленĕ, тĕрĕс ĕçлекен сыхăну фронтри çапăçусене тылри ĕçсене ăнăçлăн ертсе пыма пулăшать, нимĕç пусмăрçисене çĕнтерме пулăшать.

Халĕ сыхăнăвăн пур средствисем те фронт ĕçне пулăшса пымалла. Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота пулăшас тĕллевпе ĕçлеççĕ. Кашни связист, хăй ĕçне кирек ăçта пулсан та, фронт пулăшу ĕçне тивĕçтерессишĕн кĕрешет.

Сталин юлташ фронта пулăшассине вăйлатма чĕнни çине связистсем, мĕнпур совет работникĕсем пекех, хĕрӳллĕн ответлесе, пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Сыхăну ĕçĕн пур функцийĕсене те тĕрĕс тата хăвăрт пурнăçа кĕртсе пырассишĕн, фронтпа тыла тачăн çыхăнтарса тăрассишĕн ăмăрту çирĕппĕн кайрĕ. Çак ăмăрту халĕ, Аслă Октябрь уявĕ умĕнти кунсенче, татах та анлăланса вăйланчĕ. Ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешни сыхăну предприятийĕсемпе конторисен ĕçне лайăхлатма пулăшрĕ.

Çыхăнăвăн нумай енлĕ средствисем—почта, телеграф, телефон, радио т. ыт. те—юлашки вăхăтра йĕркеллĕрех те тĕрĕсрех ĕçлеме пуçлани пирĕн республикăн хулисемпе ялĕсенче те палăрать. Телеграммăсене тытса тăрас вăхăт, августрипе танлаштарсан, сентябрьте самаях чакнă, ку енĕпе республикăри пур предприятисемпе конторăсем тенĕ пекех (пĕр Кувакино конторисĕр пуçне) хăйсен ĕçне тикĕслетнĕ. Хаçатсемпе журналсене, плакатсемпе брошюрăсене тата ытти литературăсене сарас ĕç те планпа пăхнинчен анлăрах пулса пырать. Районри хаçатсене сарас плана, пурĕ икĕ контора çеç—Вăрнарпа Шăмăршă конторисем,—тултарайман, ыттисем пурте ăнăçлăн тултарнă.

Фронтри пек тимлĕн тата пысăк пултарулăхпа ĕçлекен связистсем пирĕн тылра сахал мар. Стахановка-телефонисткăсене, телеграфисткăсене республикăри кашни конторăрах курма пулать. Сыхăнăвăн Шупашкарти предприятинчи стахановка-телеграфистка Елена Васильева юлташ телеграф тăрăх сăмахсем çӳретмелли нормăна 2 хут ирттерсе тултарать. Улатăр конторинчи телеграфистăн М. Турышев юлташăн ĕçри хăвăртлăхĕ те çакăнтан кая мар. Почта работникĕсем те хăйсен ĕçĕнчи хăвăртлăхсене ӳстерсех пыраççĕ. Çĕмĕрле конторинчи почтальон Пушкарева юлташ подписчиксем патне хаçат-журналсем çитерсе парас вăхăта вăтамран 1 сехет те 40 минута таран кĕскетнĕ. Çакăн пек лайăх тĕслĕхсене тата та нумай илсе кăтартма пулать.

Сыхăну работникĕсен пĕр пайĕ фронта кайнă май, телеграф, телефон ĕçĕн çĕнĕ кадрĕсене хатĕрлесси пысăк задача пулса тăрать. Çак задачăна пирĕн республикăри сыхăну предприятийĕсемпе конторисем тивĕçлипе пурнăçлаççĕ теме пулать. Телеграфистсемпе телефонистсене, почта станцийĕсен работникĕсене хатĕрлекен кружоксем сахал мар ĕçлеççĕ. Опытлă сыхăну работникĕсем, хăйсем çумне çамрăксене çирĕплетсе, вĕсене телеграфист, телефонист профессине, çырусем сортлас, хаçатсем валеçсе парас ĕçсене вĕрентеççĕ. Ку таринччен ĕçлекен сыхăну работникĕсем хăйсем те (республикипе пурĕ 170 çын), заочнăй вĕренĕве хутшăнса, ĕçри квалификацие ӳстереççĕ. Вĕренĕве çапла организациленине пула, кăçалхи çулăн виççĕмĕш кварталĕнче кадрсем хатĕрлес задание республикăри сыхăну управленийĕ 208 процент тултарнă.

Анчах сыхăну ĕçĕн çĕнĕ кадрĕсене хатĕрлес ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Вĕсенчен пысăкраххи—çĕнĕ работниксене ансăртарах пĕлӳпе хатĕрлени тата вĕсене ĕçе вырнаçтарсан практикăллă пулăшу çителĕксĕр парса тăни. Районсенчи сыхăну конторисен хăшпĕр начальникĕсем çĕнĕ работницăна ĕçе лартсан, ăна малалла вĕрентсе ӳстерме кирли çинчен пачах та манаççĕ. Юлашки вăхăтра йышлăн ĕçлеме тытăннă çамрăк телефонисткăсем, телеграфисткăсем, радистсем, монтерсем тата ытти çамрăк специалистсем çине сыхăну ĕçĕнчи ертсе пыракан работниксен, парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсен ытларах çаврăнса пăхас пулать, вĕсене опытлă связистсем таран вĕрентсе ӳстерес пулать.

Пирĕн сыхăну предприятийĕсемпе конторисем начар, тикĕс мар тата сӳрĕккĕн ĕçленине кăтартакан тĕслĕхсем те сахал мар-ха. Чылай хутчен хаçатсене, журналсене, çырусемпе телеграммăсене подписчиксене адресатсем патне тĕрĕс мар е кая юлса çитерсе параççĕ. [illegible] Шупашкар хулинче [illegible] çыру [illegible] 3—4 [illegible] Тĕслĕхсем [illegible] Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене [illegible].

Почтăна районсенчи [illegible] Почта работникĕсен хисеплĕ тивĕçĕ—ĕççыннисен çыхăнури нушисене лайăх тивĕçтерессн, красноармеецсен çырăвĕсене вăхăтра çитересси, уйрăмах Хĕрлĕ Çар боецĕсен çемйисемшĕн тăрăшасси пулать. Почта работникĕсен çĕршывпа фронт умĕнчи ответлăхĕ питех те пысăк.

Анчах та районсенчи почтăн хăшпĕр тимсĕр работникĕсем çак ответлăха çухатни те пулкалать. Сăмахран, Вăрнар конторинчи работниксен сӳрĕклĕхне пула сентябрĕн 28-мĕшĕнчи почтăна иртсе каякан поезд çинчен илмесĕрех юлнă.

Сыхăну ĕçĕнче радиофикаци пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Радио тăрăх паракан çĕнĕ хыпарсемпе, Информбюро пĕлтерĕвĕсемпе кашни совет гражданинĕ хытă интересленет. Радиоузелсене пĕр чăрмавсăр ĕçлеттересси, трансляцисене лайăх пахалăхпа парасси—сыхăну ĕçĕнчи руководительсен, инженерсен, техниксен-радистсен кулленхи ĕçĕ пулать.

Сыхăну работникĕсен кулленхи тепĕр ĕçĕ вăл—телефон, телеграф хуçалăхне лайăх тытса усрасси, ăна вăхăтра юсаса тăрасси. Çак ĕçсемпе вара пирĕн республикăри сыхăну управленийĕ юлса пырать. Телефон сетьне 3-мĕш кварталта юсас плана хуласем енĕпе 57,6 процент, районсем тăрăх 71,5 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ, радиофикаци енĕпе тума палăртнă ĕçсене те 76 процент çеç пурнăçланă.

Телефон хуçалăхĕнчи юсавсăрлăхпа йĕркесĕрлĕх, çитменлĕхсемпе кăлтăксем Шупашкар хулинчи тата хуласем хушшинчи телефон станцийĕнче (начальникĕ Казеко юлташ) нумай. Телефон аппарачĕ япăх ĕçленине хулари кашни предприятипе учрежденирех курма пулать. Станцин ремонт тăвакан работникĕсем хăйсен ĕçĕсене ытла та юлхавлăн тата ячĕшĕн кăна тăваççĕ. Тĕслĕхрен, 3—99 номерлĕ телефон аппаратне юсама виçĕ хут чĕнсен тин пынă тата икĕ хут юсаса та лайăх илтĕнекен тăвайман. Заказсен сĕтелĕн ĕçĕнче те çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсем сахал мар. Кунта заказсене манăça хăварнисем, пăтраштарса янисем, кая юлса панисем час-часах пулаççĕ. Телефонисткăсем абонентсен ыйтăвĕ çине çийĕнчех ответлеменни, вĕсем çине кăшкăрса тăкни, сиввĕн калаçни, пĕр номер вырăнне тепĕр номер пани—çаксем пурте хулари предприятисемпе учрежденисенчи работниксен ĕçне чăрмав кӳреççĕ, вĕсене кӳрентереççĕ.

Сыхăнăвăн республикăри управленийĕнче тата Шупашкарти предприятийĕнче ĕçлекен работниксен сыхăну хуçалăхне юсавлă тытасси çине ытларах çаврăнса пăхмалла; телефон, телеграф тата радио ĕçĕнчи асăннă çитменлĕхсемпе чăрмавсене пĕтермелле. Пирĕн сыхăнăвăн пур средствисем те вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек — тикĕс те тĕрĕс ĕçлетчĕр. Телеграммăсем çӳретессинче, телефон, радио ĕçĕнче сыхăну работникĕсен хальхи пек час-часах ĕççыннисем ятланине мар, мухтанине, ырă сăмахне илтмелле пултăр.

Çĕршыври ĕççыннисен пысăк уявĕ—Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарни çывхарса килет. Çак уява тылра кашни работник фронта пулăшассине вăйлатнипе, хăйĕн ĕçне лайăхлатнипе кĕтсе илме хатĕрленет. Сыхăну ĕçĕнчи работниксем, пролетарилле революци 25 çул тултарнине ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе паллă тăвăр, фронтпа çĕршывăн сыхăну ĕçĕнчи нушисене лайăхрах тивĕçтерсе пырăр!

Ялхуçалăх выставкинче пулассишĕн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Тырпулсене кăçал колхоз ăнăçлăн пухса кĕртрĕ. Кĕрхи тырăна вăтам шутпа гектартан 17-шер центнер пухса илтĕмĕр, çĕрулми гектартан 800-шер пăт тухрĕ. Халĕ колхоз кĕрхи çĕртме ытларах туса хăварасшăн тата авăна хăвăртрах çапса пĕтересшĕн тăрăшать.

Районри ялхуçалăх выставкине тухма хатĕрленсе, эпир колхозăн фермисене выльăхсемпе комплектласа çитересшĕн, уйрăмах çине тăрса ĕçлерĕмĕр. Ене-пăрусен, сурăхсемпе сыснасен йышне планпа пăхнинчен чылай ытларах ӳстертĕмĕр. 1942 çулти план тăрăх фермăри сыснасен хисепĕ 80 пуç пулмалла пулсан, пирĕн халĕ вĕсем 102 пуç çитрĕç. Фермăри пăрусене кăçал [illegible] тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстернĕ, кунсăр пуçне контрактаци планне ирттерсе пурнăçласа çĕнĕрен 21 пуç пăру [illegible]. Сурăхсен йышне те, çĕнĕрен [illegible] илсе, кăçал планпа пăхнинчен [illegible] ытларах усратпăр.

Иртнĕ çулсенче ĕне ферминче йĕркелĕх пулман пирки колхоз государство умĕнче парăмлă юлчĕ. Кăçал эпир государствăна çу, аш-какай памалли планне пурнăçларăмăр, халĕ иртнĕ çулхи парăмсене парса тататпăр.

Выльăхсене хĕле кĕртме хатĕрленсе çитрĕмĕр. Витесене юсанă, утă-улăм, силос çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хунă. Кунсăр пуçне выльăхсене çитерме 1.500 центнер çĕрулми, 150 пăт кăшман уйăрса хунă.

С. ОХОТКИН,
«Туйташ» колхоз председателĕ.

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене лайăх пăхса усрас пулать

ИЕПРЕÇ. Малта пыракан колхозсем çĕрулмипе пахча-çимĕçсене вăхăтра пухса кĕртрĕç. Çавăн пекех вĕсем вăл çимĕçсене йышăнма та лайăх хатĕрленнĕ. «Заря» колхоз кăçал çĕнĕрен 70 тонна вырнаçмалăх овощехранилище туса лартнă. Пухса кĕртнĕ çĕрулмипе пахча-çимĕçсене çав овощехранилищĕсене хунă, вĕсем унта питех те лайăх сыхланса тăраççĕ.

Хумри Ишекри «Трактор» на холме» колхоз çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пĕтĕмĕшпех пухса кĕртнĕ. Çав çимĕçсене тата çĕрулмине хума пĕр çĕнĕ подвал туса лартнă, киввине юсанă. Колхозăн кăçал çĕрулми ăнса пулнипе ăна вырăнаçтарма вырăн сахал мар кирлĕ пулнă. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 200 пăт ытла çĕрулми тухнă. Пĕтĕмпе ку колхоз кăçал 4.000 пăт ытла çĕрулми пухса кĕртнĕ. Çĕрулмине чи малтан государствăна парса татнă, план тăрăх 95 центнер парас вырăнне 100 центнер панă. Кунсăр пуçне, колхозниксен хуçалăхĕсемшĕн те государствăна çĕрулми парса татнă. Çакăн хыççăн тата договор тăрăх леспродторга 40 центнер, «Союзплодоовоще» 40 центнер çĕрулми панă.

Колхоз çĕрулмипе пахча-çимĕçсенчен кашни çулах пысăк тупăш илет. Иртнĕ çулта колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх 3-шер килограмм çĕрулми валеçнĕ. Кунсăр пуçне, çĕрулми сутса 25.000 тенкĕлĕх тупăш тунă. Вĕсем çавăн пек пысăк тупăша çĕрулмине вăхăтра пухса кĕртсе, ăна лайăх сыхласа хăварнипе тума пултарнă.

Çĕрулмипе, пахча-çимĕçсемпе усă курма пĕлсен, кашни колхозах унран пысăк тупăш илме пултарать. Анчах та хăшпĕр колхозсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çине питех те сахал çаврăнса пăхаççĕ. Çĕрулмине сивĕ çуртсенче усранине пула «Коммунар», «Победа», «Комбайн» т. ыт. колхозсенче иртнĕ çулта çĕрулми сахал мар шăнса пĕтнĕ. Çуркунне вара вăрлăхлăх çĕрулми шырамалла пулнă. Вăл колхозсенче кăçал та çĕрулмине усрама шанчăклă подвалсем çук, киввисене юсаса ăшăтман, çĕрулмине çав сивĕ подвалсенех хунă. «Молния» колхозра подвал çук пирки çĕрулмине сарайне тултарса хунă. Сивĕ кунсем пуçлансанах кунти çĕрулми шăнса пăсăлма пултарать.

Д. МИХАЙЛОВ.

Государствăна хĕрлĕ обозсемпе тырă леçеççĕ

ТАВАЙ. Районри колхозсем Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă уява государство умĕнчи пур обязательствăсене те ăнăçлăн парса татнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Енĕш Нăрвашри «Красная Чувашия» колхоз, октябрĕн 10-мĕшĕнче 49 лавлă хĕрлĕ обоз организацилесе, государствăна 105 центнер тырă леçсе пачĕ. Колхоз государствăна тырă, пахча-çимĕç парас енĕпе октябрĕн 19-мĕшĕнче те 41 лавлă хĕрлĕ обоз организацилерĕ, ку кун пурĕ 90 центнер тырă леçсе панă.

Государствăна тырă парас ĕç ытти колхозсенче те ӳссе пырать. Сăкăт Пуçĕнчи «Красный Октябрь» колхоз октябрĕн 18-мĕшĕнче хатĕрлев пунктне 12 лав купăста пырса панă.

В. ИЛЬИН.

МТС-сен дирекцийĕсемпе политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Элĕк МТС-ĕ тăрăх:

173. **8-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ Егор Николаевич Николаев юлташ). Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 108,9 процент тултарнă тата 499 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

174. Комбайнер **Герман Родионович Кутузов.** Вăл «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе планра кăтартнă 80 гектар вырăнне 187 гектар тырă вырса пуçтарнă тата 20 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Куславкка МТС-ĕ тăрăх:

175. Тракторист **Сергей Степанович Малышев.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 195 процент тултарнă тата 667 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

176. Тракторист **Петр Артемьевич Ярухин.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 178 процент тултарнă тата 590 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

177. Тракторист **Николай Николаевич Желтухин.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 162 процент тултарнă тата 1.646 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

178. Тракторист **Григорий Степанович Саперов.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 162 процент тултарнă тата 327 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

179. Тракторист **Николай Михайлович Ларионов.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 162,8 процент тултарнă тата 280 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

180. Тракторист **Василий Анисимович Богданов.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 160 процент тултарнă тата 209 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

181. Тракторист **Дмитрий Васильевич Галкин.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 156,6 процент тултарнă тата 192 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

182. Комбайнер **Андрей Тимофеевич Скворцов.** Вăл комбайнпа тырă вырмалли плана 285 процент тултарнă тата 263 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

183. Комбайнер **Кузьма Петрович Антонов.** Вăл комбайнпа тырă вырмалли плана 227 процент тултарнă тата 72 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

184. Участок механикĕ **Петр Петрович Митрофанов.** Вăл хăй çумне çирĕплетнĕ комбайнсемпе тырă вырмалли плана 170 процент тултарнă тата 300 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă ятпа танксен „Колхозник Чувашии" ятлă колоннине тăвар!

Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе калани

Хаклă юлташсем!

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă уяв çывăхарса килет. Çав куна эпир йывăр обстановкăра кĕтсе илетпĕр. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем пирĕн мирлĕ пурнăçа пăсса хучĕç. Вĕсем çулталăк ытла ĕнтĕ пирĕн колхозсене, çуртйĕрсене, шкулсене варварла çĕмĕрсе пыраççĕ. Кавказ патнелле пымалли вырăнсенче, Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕç захватчикĕсем пире чуралăх, чухăнлăх тата вилĕм кӳреççĕ. Вĕсем хăйсен танкĕсен гусеницисемпе таптаса пирĕн ирĕклĕхе пĕтерсе лартасшăн, Октябрьти революцире çĕнтерсе илнисене пĕтерсе хурасшăн.

Анчах та вĕсем çакна нихăçан та пурнăçа кĕртеймĕç. Фашистла çынвĕлеренсемпе çапăçма пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленчĕ. Эпир те, колхозниксемпе колхозницăсем, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара унăн геройла çапăçăвĕнче пулăшса тăратпăр. Кăçал эпир хирти ĕçсенче ĕлĕкхинчен икĕ хут, виçĕ хут вăйлăрах ĕçлерĕмĕр, кĕске вăхăтрах пĕр çухатусăр тырă вырса пуçтартăмăр, кĕлтесене капансене хывса çитертĕмĕр, техникăлла культурăсемпе çĕрулмине вăхăтра пуçтарса кĕртрĕмĕр. Çав вăхăтрах эпир государствăна тырă, аш-какай, сĕт, çăмарта, çĕрулми тата пахча-çимĕçсем памалли хамăр обязательствăсене срокчен пурнăçларăмăр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултартăмăр. Планран ирттерсе 33 гектар кĕрхи культурăсем акса хăвартăмăр.

Эпир халăх ĕçне, çапăçура тупнă хамăр телее хӳтĕлетпĕр. Эпир хамăра Октябрь панă аслă правăсене, Сталинла Конституци çирĕплетсе хунă правăсене хӳтĕлетпĕр.

Паян çапăçу хирĕсенче пирĕн—совет государствин кунçулĕ çинчен, пирĕн халăхăн кунçулĕ çинчен, пирĕн çамрăксен пурнăçĕпе пуласлăхĕ çинчен ыйту татăлнине пирĕн колхозниксем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Халĕ пиртен пирĕн çĕршыв сăмахсем мар, боевой ĕçсем ыйтать. Хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхне пĕлсе тăрса, колхозниксемпе колхозницăсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнаççĕ, чаплă куна—Октябрь 25 çул тултарнă куна—производствăра çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе, пирĕн тăван çĕршывăн, тăшмана çĕнтерессишĕн çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Фронтовиксем—Октябрĕн çĕнтерӳвĕсене хӳтĕлекенсем—çапла тума тупа тăваççĕ: нимĕçсене пĕр шеллемесĕр çапмалла, тăван совет çĕрĕн кашни пусăмне юлашки юн тумламĕ юлмиччен хӳтĕлемелле, фашистла çара халсăрлатса пымалла, унтан пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалла.

Эпир, тылри боецсем, паттăр Хĕрлĕ Çар хăйне шеллемесĕр çапăçнă вăхăтра ĕçе хутшăнмасăр тăма пултаратпăр-и? Çук. Пин хут çук! Камăн кăкăрĕнче совет патриочĕн чĕри тапса тăрать, унăн пирĕн çĕршыва çаратма килнĕ юлашки нимĕçе пĕтерсе тăкиччен лăпланса ларма юрамасть. Хаяр тăшманăн майне пăрса хурас ĕçе пĕтĕм вăя хурар.

Эпир, Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисем, Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă ятпа тата фронта ытларах пулăшас тесе танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухма шут тытрăмăр. Эпир темиçе пин тенкĕ укçа пухрăмăр та ĕнтĕ. Укçа пухасси малалла пырать. Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен мĕнпур работниксене пирĕн пек тума чĕнетпĕр.

Юлташсем, колхозниксемпе колхозницăсем! Эпир тунă танксен колонни тата çав танксене ертсе каякан танкистсем хăйсен вут-çулăмĕпе фронтăн тата тепĕр участокне, Сталинградăн тата тепĕр районне йышăнса тăччăр!

Нимĕçе совет çыннисенчен мăшкăллама памастпăр, хамăрăн тăван çĕре, 25 çул каялла пирĕн аттесемпе тăвансем хăйсен юнĕпе çĕнтерсе илнĕ çĕре тивме памастпăр.

Сывă пултăр пирĕн тăван Совет çĕршывĕ!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç, атте, юратнă юлташ Сталин!

Пĕтĕм вăя—тăшмана аркатса тăкма!
Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Колхозсен пухăвĕ хушнипе алă пуснă:

Колхоз председателĕ—ВАСЯНИН.
ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ — ТАЛАЕВА.
Колхоз бригадирĕсем — МИШАНИН, СИТУХИН.
Колхоз агрономĕ — ЕРЛАКОВА.
Колхозри стахановецсем—ХЛЯНОВА, САКАНИН. ДОМАНИНА, КРАЙНОВА

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Цехсен çур уйăхри ĕçĕсем

КАНАШ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри цехсем хушшинче Октябрь уявĕ ячĕпе пыракан ăмăрту лайăх результатсем парать. Уяв ячĕпе илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе, чылай цехсем октябрь уйăхĕн малтанхи çурринчи заданисене ирттерсе тултарчĕç. Йывăçсем каскалакан цех коллективĕ иртнĕ çур уйăхри задание 132 процент, утильцех коллективĕ 129 процент тултарчĕç.

Токарев, Соколовский тата Ковалерчик юлташсем ертсе пыракан цех коллективĕсем те уяв умĕнхи ăмăртура хастарлăн ĕçлеççĕ. Иртнĕ çур уйăхри ĕçсен заданийĕсене вĕсем пурте ытлашшипе пурнăçларĕç.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

КВАРТАЛ ПЛАННЕ ТУЛТАРНĂ

Милютинăри механизациленĕ вăрман пункчĕн шоферĕ Мельников хăй çине машина çинчен пĕр анмасăр 100 кубометр йывăç турттарма обязательство илнĕ. Илнĕ обязательствăна вăл 36 сехет хушшинче пурнăçланă. Анчах та çакăн пек çынсем вăрман пунктĕнче нумаях мар. Фронт пире кашнинех икĕ-виçĕ çын чухлĕ ĕçлеме хушать, предприятисенчен халичченхинчен икĕ-виçĕ хут ытларах продукци пама ыйтать. Милютинăри вăрман пункчĕ квартал планне хăшпĕр енĕпе ирттерсе тултарнă пулин те, фронт ыйтнине пĕтĕмĕшпех тивĕçтереймен темелле.

Грузчиксен Зиганшин юлташ ертсе пыракан бригади плана яланах 300 процент тултарса пырать, Мельниковпа Каталишев шоферсем сентябрьти плана 200 процент тултарнă, вĕсем кулленех темелле 500 кубометр турттарас, вырăнне 770 кубометртан кая мар турттараççĕ. Анчах çакăн пек хăйсен нормисене 2—3 хут ирттерсе тултаракан çынсем вăрман пунктĕнче питех те сахал. Вăрман пункчĕн руководителĕсем стахановецсен йышне ӳстерсе, 4-мĕш квартал планне татах та ытларах ирттерсе тултарассишĕн кĕрешме тивĕçлĕ.

М. ИЛЬИН.

Çамрăк рабочисене вĕрентсе хатĕрлесси—хальхи вăхăтри пысăк ĕç

Шупашкарти пир-авăр тĕртекен фабрика (главнăй инженерĕ Я. Рохлин юлташ) пиллĕкмĕш уйăх ĕнтĕ плана тултарса ĕçлет. Фабрика ĕçĕн ăнăçлăхне, тĕпрен илсен, кадрсем татса параççĕ: рабочисемпе работницăсем çителĕклĕ пулсан, планпа пăхнă ĕçсене пурне те вăхăтра тума пулать. Анчах пирĕн ку таранччен хатĕрленĕ квалификациллĕ кадрсем сахалтарах-ха. Вĕсенчен пĕр пайĕ отечественнăй вăрçă кунĕсенче фронта кайнă май, пирĕн ума рабочисен çĕнĕ йышне хатĕрлес задача тухса тăчĕ. Çак задачăна эпир кирлĕ пек пурнăçлама тăрăшатпăр.

Çĕнĕ рабочисен хисепĕнче станочниксемпе подсобнăй ĕçсене тăвакансем ытларах. Вĕсене эпир опытлă рабочисем, мастерсем çумне çирĕплетсе тата техминимум кружокне явăçтарса вĕрентрĕмĕр. Рабочисене станок умĕнче тата ĕçленĕ вăхăтра вĕрентни лайăх результатсем парать. Фабрика ĕçĕ çинчен пĕлме мар, ăна курман чăваш хĕрачисем темĕнле кăткăс специальноçсене те ăнăçлăн вĕренчĕç тата халĕ те вĕренеççĕ. Çамрăк работницăсенчен пултарулларăххисем, производство процесне тĕплĕн вĕренсе çитсе, стахановла тухăçлăхпа ĕçлеме пуçларĕç. Тĕслĕхрен, работницăсем Сорокинăпа Таврина юлташсем пĕр станок вырăнне икĕ станокпа ĕçлеççĕ. Андреева, Николаева, Кунстманис, Хазе юлташсем сложнăй станоксемпе ĕçлесе хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ. Бугакевская, Ябрукова юлташсем те нормăна 125—130 процент тултараççĕ.

Анчах кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем сахал мар-ха. Халĕ çеç станоксем умне тăрса ĕçлеме пуçланă çамрăксене ĕçре тăтăшах пулăшса тăрас пулать, вĕсене опытлă рабочисем таран вĕрентсе ӳстерес пулать. Ку тĕлĕшпе час-часах инструктажсем ирттерни, ĕçĕн стахановла мелĕсене вĕрентни вырăнлă пулмалла.

Пирĕн тата кадрсем хатĕрлес ĕçре пĕр пысăк чăрмав пур, вăл—районсенчен килекен çамрăксем валли пурăнмалли çурт-йĕр çитменни. Çĕнĕ рабочисем валли общежитисем çук пирки пирĕн фабрикăра кадрсене йышлăн хатĕрлес ĕç чарăнса тăрать. Ку çитменлĕхе пĕтерес çĕрте пире, паллах, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула совечĕ пулăшу памалла.

А. ГЕЛЬМАН,
Производствăпа техника отделĕн начальникĕ.

Сталин юлташăн отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи выступленийĕсен сборникĕ

Чăваш АССР Государство Издательстви чăвашла тата вырăсла Сталин юлташăн выступленийĕсен сборникне кăларать. Сборник ячĕ: «Совет Союзĕн отечественнăй аслă вăрçи çинчен».

Сборнике çаксем кĕреççĕ: Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса калани; Ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕпе Мускав хулинчи партилле тата общественнăй организацисен чаплă ларăвĕнче 1941 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклад; 1941 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Мускаври Хĕрлĕ площадьре пулнă Хĕрлĕ Çар парадĕнче тухса каланă сăмах; Оборона Халăх Комиссарĕн 55-мĕш номерлĕ приказĕ; Оборона Халăх Комиссарĕн 130-мĕш номерлĕ приказĕ тата Америкăри Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине панă ответ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Иртнĕ эрнере, октябрĕн 11-мĕшĕпе 17-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсем çинче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 130 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăтрах пирĕн 49 самолет пĕтнĕ.

* * *

Октябрĕн 17-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци нимĕçсен 5 танкне, войскăсем тиенĕ 30 автомашинине, горючи тултарнă 4 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пĕр ротăна яхăн пехотине салатса янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн пехотипе танкĕсен хаяр атакисене сире-сире янă. Противникăн пехоти танксем тата авиаци пулăшнипе пирĕн опорнăй пунктсене темиçе хутчен атакăланă. Çав участокри çапăçусенче пирĕн боецсем нимĕçсен 28 танкне, 8 орудине, минометсен 10 батарейине, 10 автомашинине тата противникăн 3 батальона çити пехотине пĕтерсе тăкнă. Пĕр заводăн районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем гитлеровецсен атакисене сире-сире ярса, пĕр кун хушшинче нимĕçсен 17 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вырăнти çапăçусем тата разведка тăвакан отрядсен тытăçăвĕсем пулса иртнĕ. Пирĕн пĕр часть çапăçуллă разведка тунă. Противник контратакă тунă, ăна пирĕн подразделени сирсе парахнă. Çав çапăçура нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 6 пулемет, темиçе вуншар винтовка тата 10.000 патрон тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем противникăн 120 салтакне вĕлернĕ.

* * *

Моздок районĕнче противник пирĕн позицисене темиçе хутчен атакăланă. Пирĕн войскăсем наступлени тăвакан нимĕçсене каялла сирсе янă, вĕсене чылай пысăк çухатусем кӳнĕ. 600 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 19 пулемет тытса илнĕ. Пулеметчик старши сержант Каюмов юлташ тăшманăн 60 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Красноармеец Самойлов юлташ нимĕçсен икĕ моторлă бомбардировщикне винтовкăпа персе ӳкернĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре противник хаяр çапăçусем хыççăн пĕр шоссе çулĕ патне татса кĕнĕ. Пирĕн чаçсем нимĕçсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ, вĕсене хăйсене пырапыра çапаççĕ. Кузьмин юлташ командир пулса тăракан часть, противникăн атакисене сире-сире ярса, нимĕçсен пехотине 2 ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн автоматчиксем старши лейтенант Губанов юлташ командир пулса ертсе пынипе противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та çирĕплетнĕ 10 тачкăна ишĕлтерсе антарнă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Карелпа финн партизанĕсен отрячĕ противникăн склачĕсене тапăннă. Партизансем 39 белофинна вĕлернĕ. Тырпулпа фуражăн пысăк запасне çунтарса янă, противникăн телефонпа телеграф линине 1.200 метр тăршшĕнче çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 60-мĕш мотострелковăй дивизийĕн 120-мĕш мотопехотнăй полкĕн ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Рихард Вальтер çапла каласа панă: «Сентябрь уйăхĕн варринче пирĕн полкăн ротисене çынсем хушса пачĕç, вара кашни ротăрах 150-шар салтака çитрĕ. Икĕ эрне иртсен 7-мĕш ротăра мĕн пурĕ те 12 çын кăна тăрса юлчĕ. Ытти ротăсенче те 15—20-шер салтакран ытла пухăнайрас çук. Çав тери пысăк çухатусене пула тата кĕрхи кунсем çитнĕ пирки салтаксен шухăш-кăмăлĕсем питех те начарланса кайрĕç. Çуркунне пурин те пĕчĕк те пулин шанчăк пурччĕ. Акă çу кунĕсенче вăрçă пĕтĕ те киле таврăнăпăр, тесе шутлаттăмăр ун чухне эпир. Анчах та питех те нумайĕшĕ кĕркунне çитиччен те пурăнаймарĕç, юлнисен хĕл кунĕсем çитсе тăнипе киле таврăнас шанчăкĕ пĕтсе ларчĕ. Эпир пурте пире вилĕм аллисем ярса илнине туйса илтĕмĕр».

* * *

Нимĕçсен 256-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Фридрих Шнейдер çапла каласа панă: «Мана вырăссен пилĕк ялĕнче пулма тӳрĕ килчĕ. Эпĕ курнă тăрăх, çав ялсенчи хресченсем питех те начар пурăнаççĕ. Нимĕç влаçĕсем вĕсен мĕнпур выльăхчĕрлĕхне, тырри-пуллине, çĕрулмине йăлтах туртса илнĕ. Эпĕ выçса çитнипе йĕрекен ачасене нумай куртнă. Çар комендатури ялсенчи халăха кашни çынна уйрăм номер парса тухнă. Çав номере кашни çын хăйĕн кăкăрĕн сулахай енче çакса çӳремелле. Çавăн çинчен мана çапла ăнлантарса пачĕç: «Вырăссем вĕсене нимĕçсем хăйсенчен кайра тăракан çынсем вырăнне хунине пĕлсе тăччăр тесе çапла тăваççĕ, терĕç».

* * *

Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче Дураццора (Албания) итальянецсен 9 матросĕ нимĕн хыпарсăр çухалнă. Полици нумай вăхăт хушши шыранă хыççăн вĕсен виллисене тупнă. Матроссене Албани патриочĕсем вĕлерни палăрнă. Пĕр уйăх хушшинче албанецсем Дураццора Итали оккупанчĕсене 74 çынна вĕлернĕ. Итали салтакĕсемпе матросĕсем хулара пĕчченшерĕн çӳреме хăраççĕ.

Октябрĕн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Пĕр участокра противникăн пехотипе танкĕсем Н-ски чаçăн позицийĕсене атакăланă. Пысăк çухатусем тӳссе, гитлеровецсем пĕр квартала йышăнса илнĕ. Урамсенче тăшманăн çĕр-шер вилли выртса юлнă. Нимĕçсен 18 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 9 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне, зенитнăй артиллери противникăн 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем выръанти çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 5 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ, минометсен батарейине тата артиллерин икĕ батарейине пĕтерсе тăкнă, противникăн атака тума хатĕрленсе тăнă пехотине сапаласа янă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем гитлеровецсен виçĕ атакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен салтакĕсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 11 пулемет тата минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă, противникăн 20 блиндажне çĕмĕрнĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем, противникăн атакине сирсе ярса, нимĕçсен пехотине виçĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Гварди капитанĕ Пшеничный командир пулса ертсе пыракан боецсем, противотанковăй орудисемпе персе, противникăн 11 танкне çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Кочетов юлташăн отделенийĕнчи боецсем нимĕçсен окопĕсене çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та 50 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата 26 винтовка, 2 пулемет тытса илнĕ.

* * *

Командир Лидов ертсе пыракан черноморецсен ушкăнĕ катерпа пырса тăшманăн тылне аннă. Боецсем румынсен 45 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, икĕ пысăк калибрлă пулемета, виçĕ автомашинăна тата радиостанцие пĕтерсе тăкнă. Краснофлотецсем пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕн пĕр ушкăнĕ противникăн автоколонине тапăннă та çар грузĕсем тиенĕ 9 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Партизансен тепĕр ушкăнĕ 6 кĕпере сирпĕнтерсе янă, чугунçула 2,5 километр тăршшĕнче пăсса хунă тата 27 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен 113-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 261-мĕш полкри салтака Рудольф Хоппене тыткăна илнĕ. Çав салтак вунçичĕ çулта çеç. Çак юрăхсăр çын гитлерла йĕрке пăсса парахнă фашистла çамрăксен чăн-чăн представителĕ пулса тăрать. Рудольф Хоппе çапла каласа панă: «Эпĕ виçĕ çул хушши гитлерла çамрăксен организацийĕн членĕ пулса тăтăм. Пире çар ĕçне вăйлăн вĕрентрĕç, кашни кун ăшалантартчĕç. Час-часах пирĕн пата фронтсенче тата оккупациленĕ çĕршывсенче пулнă эсэсовецсем пыратчĕç. Вĕсем çапла калатчĕç: Гитлер Германи çарĕ умне славян халăхĕсене пурне те вĕлерсе пĕтерес тата пĕтĕм тĕнчене Германие пăхăнтарас задача лартнă, тетчĕç. Эсэсовецсем хăйсем вăрçăра çӳрени çинчен, Польшăра, Норвегире, Югославире тата Российăн оккупациленĕ районĕсенче çынсене массăллăн пере-пере вĕлерни çинчен каласа паратчĕç. Пире—хаярлăх салтакăн чи лайăх енĕ пулса тăрать, тесе ĕнентеретчĕç. Эсэсовецсем пире тытса илнĕ çĕршывсенчи парăнман çынсене мĕнле пусармаллине, лăплантармаллине вĕрентетчĕç. Пурин те вĕсен пĕр сăмахчĕ: пĕр хĕрхенмесĕр, лăпкăн, пăшăрханмасăр-тумасăр вĕлерме вĕренес пулать, тетчĕç. Хăшĕ-пĕри пĕр пин, икĕ пин çынна вĕлертĕм тесе мухтанатчĕç. Вĕсен сăмахĕ тăрăх, малтан çынсене, уйрăмах та хĕçпăшалсăр хĕрарăмсемпе ачасене, вĕлерме хăрушă пулнă. Анчах характер пур çын çак ĕçе часах хăнăхать те унтан вара çав ĕçе обязанность йĕркипе çеç мар, киленсе кайса тăвать».

Малалла тыткăна лекнĕ салтак çапла каласа панă: «Çак кунсенче вырăссем пирĕн позицисене артиллерирен пемесĕр тытăнчĕç. Унтер-офицер Шмидт салтаксене çапла кăшкăрса каларĕ: «Ан хăрăр, окопсене пытанăр, вырăссем атака тума пуçласан, вĕсене юлашки патрон юлмиччен перĕр», терĕ. Вырăссем атака тума пуçласан хайхи Шмидт тухса шунă, пире пăрахса хăварнă. Салтаксем нумайĕшĕ вилчĕç, хăшĕ-пĕри тарчĕç, эпĕ аптăраса ӳкрĕм те тыткăна лекрĕм».

* * *

Ленинград облаçĕнчи Лычно ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем 20 хресчене персе вĕлернĕ. Сăлтавĕ кунта колхозниксем питех те йывăр налогсене тата йышлă штрафсене тӳлеме килĕшменни пулнă.

Ют çĕршывсенче

Совет правительствин заявленийĕ çинчен Уэллес калани

ВАШИНГТОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Правительстви гитлерла преступниксене айăпласси çинчен тунă заявление ăнлантарса панă май, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес пресс-конференцире çапла каланă: «Çак вăрçăра тунă хăрушă та тискер ĕçсемшĕн айăплă çынсене мĕнле принципсене пăхăнса суда памалли тĕлĕшпе Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ пĕтĕмĕшпех пĕр шухăшлă пулнине эпĕ питех те кăмăллатăп», тенĕ. Уэллес çавăн пекех тата çакна та кăтартса панă: çавăн пек суд процесĕсене мĕнле майпа организацилессине лайăх пăхса тухма тивет, çавăнпа та çак ĕçпе интересленекен çĕршывсем çитес вăхăтрах ун тăрăх консультаци тăвасшăн пулĕç, тенĕ.

Совет правительствин заявленийĕ Америкăри хаçат-журналсенче

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче тунă тискер ĕçсемшĕн гитлерла захватчиксем тата вĕсемпе пĕр каварлисем ответлă пулни çинчен Совет Правительстви тунă заявлени Америка пичетĕнче тĕп вырăн йышăнса тăрать. Нью-Йоркра тухса тăракан пур хаçатсем те Совет Правительстви тунă заявленин текстне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пичетлесе кăларнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçат Совет Правительстви тунă заявлени текстне пĕтĕмĕшпех 1-мĕш страницăра пичетлесе кăларнă, ятне çапла панă: «Совет Правительстви—вăрçăра тунă преступленисемшĕн айăпламалли суд процесĕсене халех пуçласа яма ыйтать», тенĕ.

Нью-Йоркри, Бостонри, Сан-Францискори тата Америкăри ытти хуласенчи радиостанцисем те Совет Правительстви тунă заявленин пĕтĕм текстне халăха англичансен, испанецсен тата ытти халăхсен чĕлхисемпе вуласа панă.

Уилки заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельтпа калаçнă хыççăн Уилки пичет представителĕсене официальнăй йĕркепе заявлени тунă, çав заявленире вăл хăй кайса килнин итогĕсем çинчен каласа панă. Эпĕ кайнин тĕллевĕ, тенĕ Уилки, «пĕрремĕшĕнчен, çак вăрçăра çĕнтерес тĕллев пирки Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пĕрлĕх пуррине пирĕн союзниксене тата нейтральнăй нумай çĕршывсене кăтартса парасси пулнă». «Эпĕ кайнин иккĕмĕш тĕллевĕ, тенĕ малалла Уилки, президентăн хăшпĕр секретлă хушăвĕсене çак вăрçă çинчен, çак вăрçăра çĕнтересси çинчен, вăрçă хыççăнхи мир тĕреклĕ пулмалла туса çĕнтересси çинчен хамшăн та, Америка халăхĕшĕн те май килнĕ таран нумайтарах пĕлесси пулнă. Эпĕ нумай пĕлтĕм. Хам пĕлнин хăшпĕр пайне эпĕ Каиртан, Мускавран тата Чунцинран пĕлтернĕччĕ», тенĕ.

Уилки юлашкинчен çапла каланă: эпĕ çакна пĕлсе çитрĕм: американецсен нумайĕшĕн, çав шутра официальнăй деятельсен те, «эпир çĕнтерме пултаричченех малтан хăйсен мускулĕсемпе мимне хытă ĕçлеттерес пулать. Хамăн ĕçе тытăничченех эпĕ малтан хам çĕршывăн гражданĕсене отчет пама тăрăшăп, çакă пурин умĕнче те тăракан çĕнĕ задачăна — çак вăрçăра çĕнтермешкĕн тата мире çĕнтерсе илмешкĕн хамăра хамăр вĕрентсе улăштарас задачăна пурнăçа кĕртме пулăштăр». Уилки çывăх вăхăтрах Америка общественноçне хăй кайса килни çинчен тĕплĕн каласа пама пулнă.

Пичет представителĕсем Уилкине нумай ыйту панă, çав ыйтусем çине Уилки ответсем панă. «Германия Совет Союзне нихăçан та аркатса тăкайрас çук», тесе шанса каласа, Уилки хăй Мускавра пичет представителĕсене каланине тепĕр хут татăклăн çирĕплетсе панă; Мускавра вăл чи çывăх вăхăтрах иккĕмĕш фронта уçма чĕннĕ тата общественноçа çар руководителĕсен ĕçĕсене васкатмашкăн хистеме сĕннĕ. Уилки сăмахĕ тăрăх, Рузвельт ăна çапла ĕнентерсе каланă: Америкăри хăшпĕр хаçатсем Уилки иккĕмĕш фронт уçмалла тенине Рузвельт ырламасть тесе тĕрĕс çырман, тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Уилки Рузвельтпа калаçнă хыççăн пичет представителĕсене çапла каланă: «Хам пулнă мĕнпур çĕршывсенчи çар эксперчĕсен шухăшĕсене пăхса тухса эпĕ иккĕмĕш фронт тума пуррине пĕлтĕм», тенĕ.

Уилки çар руководителĕсене хистеме» кирли çинчен каланине хăшпĕр хаçатсем критикăланине хирĕç Уилки çапла каланă: «Эфективнăй демократи вăл общество шухăшĕ руководительсене хăй майлă çавăрма пултарассипе усă курма хушать. Çар руководителĕсем ку шутран тухса ӳкмеççĕ», тенĕ.

Вăрçăри лару-тăру çинчен Уилки çапла каланă: «Ку вăрçăра эпир çĕнтеретпĕр. Пирĕн енче—вăй тата ресурссем. Эпĕ хамăр çĕнтерессине ĕненетĕп. Анчах та çакăн пек пĕр ыйту юлать-ха: çĕнтерӳ пире мĕн тери хакла ларĕ тата эпир хăçан çĕнтерĕпĕр. Эпĕ кунта çĕнтермешкĕн миçе çыннăн вилмелле пуласси çинчен калатăп».

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат Уилки каланине çакăн пек ят парса пичетленĕ: «Уилки иккĕмĕш фронта часрах уçмалли çинчен ĕнентермеллех тепĕр хут каларĕ... Çарпа флотăн хăшпĕр представителĕсем иккĕмĕш фронт çинчен пыракан калаçусене пусарса лартасшăн пулнă пирки кăна хăй нимĕн чĕнмесĕр тăма килĕшменни çинчен Уилки ăнланмаллах каласа пачĕ».

ГРЕЦИРИ ПАРТИЗАНСЕМ КĔРЕШНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Грецире Эпир, Македони тата Фессали тăвĕсем хушшинче партизансен вăйлă отрячĕсем кĕрешеççĕ. Партизансем Кăнтăр Македонипе Çурçĕр Фессали районне хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Нумаях пулмасть партизансен отрячĕсем Итали войскисемпе тĕл пулнă. Пуçланса кайнă çапăçура 20 итальянеца вĕлернĕ.

Çав хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Грецири пĕтĕм халăх партизансене мĕнпур майпа пулăшма тăрăшать. Гитлеровецсемпе пĕрле ĕçлекен йышлă мар çынсене вăл сутăнчăксем çине пăхнă пек пăхать.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИЕ ÇАРАТАÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Экономикăллă вăрçă министерствин парламент секретарĕ Фут çапла каланă: куçулăн малтанхи ултă уйăхĕн хушшинче Франция Германие 315 миллион та 900 пин фунт стерлинга яхăн укçа тӳленĕ, тенĕ. Фут тата çапла каланă: çав суммăн миçемĕш пайĕ Германин оккупациллĕ çарне усрас ĕçе кайни çинчен манăн тĕрĕс даннăйсем çук, анчах та çав сумма 100 миллион фунт стерлинга яхăн пулать пуль тесе шухăшлатăп эпĕ, тенĕ.

Иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтаççĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Англири пĕр пысăк авиаци заводĕнчи рабочисем резолюци йышăннă, унта вĕсем хăйсем Сталинграда хӳтĕлекенсем паттăррăн кĕрешнипе хĕпĕртени çинчен тата вĕсене хисеплени çинчен каласа параççĕ. Сталинграда хӳтĕлекенсене чĕнсе, çав резолюцире çапла каланă: «Сире пулăшас енĕпе хамăр çине илнĕ обязательствăсене «пĕтĕмпех тата вăхăтра» пурнăçлама май пама чĕнекен пирĕн сасă кашни кун хытăран хытă илтĕнме пуçларĕ» тенĕ.

Вулвич арсеналĕн рабочийĕсем Черчилль патне халех иккĕмĕш фронт уçма ыйтса телеграмма янă.

Глазгори чи пысăк верфьри фабрика старостисен комитечĕ халех иккĕмĕш фронт уçма ыйтать, производствăра нихăçан пулман пек çĕкленӳ пуçласа ярассине астутарать. Клейд шывĕ çинчи тепĕр пысăк верфьри рабочисем иккĕмĕш фронт уçма ыйтса çапла калаççĕ: «Пирĕн иккĕмĕш фронта халь, гитлеровецсем Сталинград патĕнче вилĕмле çапăçăва кĕрсе кайнă вăхăтра, уçмалла».

Манчестерти вăрçă хатĕрĕсем тăвакан заводри тата Ковентрири пысăк предприятири рабочисем те иккĕмĕш фронт уçма ыйтса резолюци йышăннă.

Октябрĕн 16-мĕшĕнче Лондонра транспорт рабочийĕсен профсоюзĕн конференцийĕ пулса иртнĕ. Çак союз вăл Англири чи пысăк союз пулса тăрать, унта пĕр миллион член тăрать. Конференцире мĕнпурĕ 500 делегат пулнă, вĕсенчен нумайĕшĕ çĕршывăн вăрçă хатĕрĕсем тăвакан чи кирлĕ отраслĕсен представителĕсем пулса тăраççĕ. Конференци фашизма хирĕç кĕрешекен вăйсем пĕрлешсе наступлени тăвас ĕç вăраха кайнă пирки кăмăлсăрланнине кăтартакан резолюци йышăннă. «Англин тата ытти пĕрлешнĕ халăхсен кунçулĕ,—тенĕ малалла резолюцире,—хальхи вăхăтра пулса пыракан çапăçусенчен килет. Россия чаплăн тата нумай вăхăт хушши хирĕç тăни пире пĕрлешсе наступлени туса хăвăрт çĕнтерме май парать. Çавăнпа та эпир Англи правительствине Европăра союзниксен наступленине мĕн май пур таран хăвăртрах пуçлама чĕнетпĕр».

Индири лару-тăру

ДЕЛИ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Индири пичет Индире пулса иртекен хумханусемпе арестсем çинчен çырса пĕлтерет. Бомбейра 300 çынна ытла арестленĕ, вĕсене пурне те хумханăва хутшăннăскерсем тесе шутлаççĕ. 500 хĕрарăм демонстраци тума хăтланнă, анчах та вĕсене полици сапаласа янă. Октябрĕн 9-мĕшĕнче Пунра демонстрацисем пулса иртнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бомбейра юлашки кунсенче паллă ушкăнсен чылай представителĕсене арестленĕ.

Совет Союзĕпе Куба пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ тата консуллă çыхăнусем тытма пуçлани

ССР Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи посолĕпе М. М. Литвиновпа Куба республикин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи посолĕ господин Аурелио Конческо хушшинче калаçусем пулса иртнĕ. Вĕсем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Куба Республики пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ тата консуллă çыхăну тытма пуçласси çинчен калаçса татăлнă.

Совет Союзĕпе Люксембург пĕр-пĕринпе çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлани

ССР Союзĕн Бельги правительстви çумĕнчи посланникĕпе А. Е. Богомоловпа аслă Люксембург герцогствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ господин Беш хушшинче калаçусем пулса иртнĕ. Вĕсем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе аслă Люксембург герцогстви пĕр-пĕринпе çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçласа пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем ярасси çинчен калаçса татăлнă.

ХРОНИКА

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ ССР Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне М. М. Литвинова çав вăхăтрах ССР Союзĕн Куба республикинчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

* * *

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ ССР Союзĕн Бельги правительстви çумĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникне А. Е. Богомолова çав вăхăтрах ССР Союзĕн аслă Люксембург герцогствин правительстви çумĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Земляксен çырăвĕсем

Тăван кил-çурт

Старши лейтенант Любавинăн тăван ялне полк пырса кĕнĕ вăхăтра вăл мĕнле хумханнине каласа пама хĕн. Çак вăхăтра унăн чĕри, темĕншĕн, уйрăмăнах хăвăрттăн тапнă. Вăл хăйĕн тăван кил-çуртне çитсе çемьисене курасшăн васканă.

Любавин ял çумĕпе пăрăнса, ял варринче ларакан клуб еннелле васкаса утнине пурте асăрханă. Клуба хирĕç, сирень тĕмĕсем хушшинче ларакан çурт тĕлне çитсен пĕр вăхăтлăха чарăнса тăнă. Çапăçу çаплах чарăнман-ха. Пульăсем çывăхранах шăхăра-шăхăра иртнĕ, минăсемпе снарядсем шартлата-шартлата çурăлнă.

Любавин хăйĕн кил-çуртне малтанхи хут анчах курнă пек тĕлĕнсе пăхнă, мĕншĕн тесен унăн чӳречисем те, алăкĕ те ванчăк пулнă. Любавин çак кил-çуртра çуралнă, ӳссе çитсе йĕкĕт пулнă, çак кил-çуртрах унăн амăшĕпе арăмĕ тата пĕчĕк хĕрĕ пурăннă.

Любавин хăйĕн тăван ялне килме питĕ васканă, тăван ялне вăрçса илес тĕлĕшпе вăл нумай вăй хунă. Акă халĕ унăн умĕнче тăван ял, тăван кил-çурт. Анчах картишĕнче те, пӳрт ăшĕнче те нимĕнле сас-чĕв çук. Старши лейтенант майĕпен килкарти алăкĕ патне пырса ăна уçнă. Алăкăн чĕриклетнĕ сасси Любавина тата тепĕр хут хумхантарса илнĕ. Вăл пăлтăра кĕнĕ, пӳрт алăкне уçнă. Ун умĕнчех вăл, пӳрт урайĕнче, савăт-сапасемпе тенкел çĕмрĕкĕсем сапаланса выртнине курнă. Тĕпелне кĕрсен, сак çинчи юн вырăнĕсене курни ăна сивĕ тытнă пек чĕтретнĕ.

Нумай юн курнă Любавин вăрçăра. Анчах вăл нихăçан та юнран хăраман. Халĕ ăна сак çинчи юнлă вырăнсем хăратмаллипех хăратнă. Любавин ăнтан кайса сулăнса кайнă, юн вырăнĕсене курасшăн мар пулса куçĕсене хупăрланă. Хăй те сисмен, унăн куçĕсем тĕттĕмленнĕ.

Урамра, клуб çывăхĕнче пысăк снаряд шартлатса çурăлнипе çеç Любавин тăна кĕнĕ. Вăл татах шухăша путнă. Вĕсеннех-ши вара, çак кил-çурт? Йăнăшман-и вăл? Çук, йăнăшман. Вĕсеннех. Апла пулсан ăçта унăн амăшĕ, арăмĕ тата пĕчĕк хĕрĕ Нюра?

Хапха тепĕр хутчен чĕриклетсе уçăлнă сасă илтĕннĕ. Алăк тулашĕнче такам иккĕленсе пусакан йывăр ура сассисем илтĕннĕ. Пӳрт алăкĕнчен майĕпен старик кĕрсе тăнă. Ку вăл Любавин амăшĕн пиччĕшĕ, суккăр Аким старик пулнă. Аллисемпе хыпашлакаласа вăл тĕпел еннелле утнă.

—Леня, эсĕ-и кунта? Е, кам та пулсан урăх çын-и? Эпĕ пӳртре кам пуррине пачах та курмастăп-çке.

— Эпĕ, эпĕ, Аким ассатте. Мансăр пуçне кам килтĕр тата кунта?

Урайăн вăта çĕрне çитсен унăн аслашшĕ чарăннă, тутисем унăн темĕн каласшăн пулнă, калайман, темĕншĕн сивĕ тытнă пек чĕтренĕ, аллинчи туйи çĕре персе ӳкнĕ.

— Леня, ăçта эсĕ? Килсе тыт мана, чунăм. Любавин ăна хулĕнчен тытса, сак çине ларма пулăшнă. Старик курман куçĕсемпе мачча çинелле тĕллесе, мĕн пулса иртнине пĕтĕмĕшпех каласа панă.

* * *

Яла килсе вырнаçнă нимĕçсен гарнизонĕнче паника хускалнă. Хĕрлĕ Çар шоссе çулĕ тăрăх çирĕплетнĕ вырăнтан каçса, яла çавăрса илет тенĕ сăмах сарăлнă. Нимĕçсем вăрçă хатĕрĕсене васкаса пухнă, лавсемпе автомашинăсем çине тиенĕ. Ялти мĕнпур ĕçлеме юрăхлă çынсене пухса, нимĕçсем вĕсене хăйсемпе пĕрле илсе каятпăр, тесе пĕлтернĕ. Ун çинчен старши лейтенантăн амăшĕне арăмне—Анастасия Михайловна Любавинăпа Татьяна Сергеевнăна та пĕлтернĕ. Вĕсем иккĕшĕ те нимĕçсемпе кайма килĕшмен.

— Эпĕ ватă,—тенĕ Анастасия Михайловна комендатурăран пынă нимĕç салтакне.—Танян пĕчĕк ачи пур. Эпир ниçта та каймастпăр.—Нимĕçе вăл пĕчĕк Нюрăна кăтартнă.

Нимĕç салтакĕ çаплах пӳртрен тухман, темĕскер вăл мăкăртатнă. Хыттăн вăл: мой штет фас!—тесе кăшкăрнă.

— Эпир пыраймастпăр,—тенĕ Анастасия Михайловна.

— Мĕнле вăл пыраймастăр?—тепĕр хут кăшкăрнă нимĕç.Айтăр хăвăртрах!

Темиçе минута тавлашса тăнă хыççăн, вăл Анастасия Михайловнăна аллинчен ярса тытнă. Ăна картишне сĕтĕрсе тухнă.

—Пыратăр-и?—тесе кăшкăрнă нимĕç хыттăн. Анастасия Михайловна килĕшмен. Нимĕç ăна çавăнтах кăкăрĕнчен тĕллесе пистолетран пенĕ. Пăшал сассине илтсе, пӳртрен Таня чупса тухнă, карчăк вăл вăхăтра çĕр çине персе аннă. Таня кăшкăрса, карчăк патне пулăшма пынă. Анчах тискер йытă ăна та пистолетран пенĕ. Татьяна Сергеевна та çавăнтах тĕшĕрĕлсе аннă. Нимĕç кусемпе кăна çырлахман. Вăл пӳрте кĕнĕ.

Пĕчĕк Нюра сак çинче пуканепе выляса ларнă. Карташĕнчи пăшал сассисенчен вăл нимĕн те хăраман. Мĕншĕн тесен вăл пăшал сассисене нумай илтнипе йăлтах хăнăхса çитнĕ.

Нимĕç Нюра патне пынă. Нюра ун çине хăйĕн пĕчĕк куçĕсемпе тĕллесе пăхнă.

Нимĕç сехет çине пăхнă. Виçĕ сехет çитесси тата 15 минута пулнă. Виçĕ сехет те 15 минутăра лавсене хускалса кайма приказ пулнă. Нимĕç автоматне хулпуççи тĕлне çĕкленĕ. Вăл вăхăтра Нюра ун çине йăвашшăн тинкерсе пăхнă. Унăн куçĕсем кăвак, çӳçĕ кăтра, тĕлĕнмелле илемлĕ пулнă.

Нимĕç пĕр вăхăта чарăнса тăнă, унтан автоматăн тимĕр рукояткипе ачан пуçĕнчен пĕтĕм вăйĕпе çапнă. Нюра пĕр сас-чӳсĕрех хăйĕн пуканийĕпе пĕрле урайне чикĕнсе аннă.

Любавин çак хыпарсене итленĕ вăхăтра пĕр сăмах та чĕнме пултарайман. Унăн вăйĕ пĕтсе килнĕ.

— Тухар пӳртрен,—тенĕ Аким старик. Вара вĕсем иккĕшĕ те урама тухнă. Любавинăн урисем ăна итлесшĕн пулман. Вăл пĕр вырăнта хытнă пек чĕнмесĕр тăнă, пит-çăмартийĕсем тăрăх куççулĕ шăпăртатса аннă.

* * *

Тăван çĕршывшăн хăюллăн та паттăррăн çапăçнăшăн икĕ орден илме тивĕçлĕ пулнă çыннăн куççулĕ тумланнине малтанхи хут куракан боецсем унăн хуйхине туйса çĕлĕкĕсене хывнă.

Любавинăн юратнă амăшĕ пулнă. Халĕ вăл çук. Унăн юратнă арăмĕ пулнă. Халĕ вăл çук. Унăн юратнă пĕчĕк хĕрĕ пулнă. Халĕ вăл та çук. Тăван кил-çурт вырăнне—шăтăк хӳмесем. Тăван ял вырăнне—çуннă кăмрăк куписем...

Любавин сасартăк пуçне çĕклесе йĕри-тавралла пăхнă та:

— Эсир кунта-и, юлташсем!?—тесе чĕннĕ вăл хăйĕн боецĕсене. — Кайрăмăр, малалла нимĕçсем çине!

Я. КАРГИН.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—93, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

ЧТ 11566 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 52 84 п. п.